# Чăваш чĕлхи кунĕ

## (Шкул çулне çитмен ачасемпеirttermelli уяв сценарийĕ)

**А.В. СКВОРЦОВА**, *Элĕк районĕнчи Тавăтри «Пучах» ача сачĕн воспитателĕ*

**Тĕллевсем:** ачасене И.Я. Яковлев ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарасси; вăййасемпе сăвă-юрă урлă чăваш чĕлхине юратма, аслисене хисеплеме хăнăхтарасси; тăван халăх культурине хаклама, упрама вĕрентесси.

**Уяв юхăмĕ**

Чăваш тумĕ тăхăннă ачасем зала хавас кĕвĕпе кĕрсе вырнаçса ларaççĕ.

Е р т с е  п ы р а к а н. Ырă кун пултăр, ачасем, хисеплĕ ашшĕ-амăшĕсем! Кашни çул ака уйăхĕн 25-мĕшĕнче Чăваш чĕлхи кунне уявлатпăр. И.Я. Яковлев çуралнă кунĕнче иртекен çак чаплă уява палăртма пуçланăранпа кăçал 25 çул çитрĕ, ăна эпир 1992 çултанпа паллă тăватпăр. Паян эпир те, «Пучах» ача пахчин воспитателĕсемпе садике çӳрекенсем, Иван Яковлевича сума суса, ăна асăнса Чăваш чĕлхи кунне уявлатпăр. Иван Яковлевич Яковлев ятне Чăваш Енпе Раççейре кăна мар, ют çĕр-шывсенче те асра тытаççĕ.

Пирĕн республикăн тĕп хулинче И.Я. Яковлев палăкĕ пур. Ун ячĕпе музей та уçнă. Чăваш патшалăх педагогика университечĕ И.Я Яковлев ячĕпе хисепленет. Шупашкарти аслă урама тата Элĕк районĕнчи Элĕк шкулне ун ятне панă. Иван Яковлевич çинчен кĕнекесем çырнă, фильмсем ӳкернĕ.

И.Я. Яковлев чăваш халăхне питĕ юратнă, тăван халăхшăм калама çук нумай ĕç туса хăварнă. Вĕсенчен чи пĕлтерĕшлисем – çĕнĕ чăваш çырулăхне йĕркелени, чăваш букварьне кăларни, шкулсем уçса вĕсенче чăваш ачисене вĕрентни, чăваш учителĕсем хатĕрлени. Ахальтен мар ĕнтĕ вăл хăйĕн «Чăваш халăхне панă халалĕнче»: «Манăн чунăм пĕрмаях сирĕншĕн çунатчĕ, халь те ак манăн мĕн пур шухăшăм сирĕн çийĕре куçрĕ», – тесе çырса хăварнă.

Чăнах та, тăван килтен, тăван çĕртен хакли нимĕн те çук. Кирек ăçта кайсан та тăван кĕтес асран тухмасть.

1 - м ĕ ш  а ч а.

Çĕр-шывăм, Чăваш Ен,
Халăхсен пĕр çемйинче,
Пур тĕнчемĕр умĕнче.
Çамрăклан та чечеклен!

2 - м ĕ ш  а ч а.

Чăваш Ен вăл – тăван ен!
Чуна ăшă хамăр ен.
Чун ăшшисĕр пурăнма
Чăннипех те çăмăл мар.

3 - м ĕ ш  а ч а.

Тăван çĕр-шыв çинчен
Ялан юрлать чĕре.
Çурхи кунсем çитсен
Çĕр-шыв мĕнле хитре!

4 - м ĕ ш  а ч а.

Тăван çĕр-шыв, Тăван çĕр-шыв –
Тĕнчере пĕрре,
Тăван çĕр-шыв, Тăван çĕр-шыв –
Ĕмĕр-ĕмĕре!

Ачасем «Илемлĕ, илемлĕ» юрă юрласа çаврăнаççĕ.

Е р т с е  п ы р а к а н. Чăваш чĕлхи Чăваш Республикинче, вырăс чĕлхи пекех, патшалăх чĕлхи шутланать. Кунсăр пуçне пирĕн тăван чĕлхемĕр Тутар, Пушкăрт республикисенче, Самар, Оренбург, Чĕмпĕр облаçĕсенче те анлă сарăлнă. Ман сире шанас килет! Чăваш чĕлхи малашне те кашни кун янăратăр – килте те, урамра та, хулара та, ялта та, пирĕн ача садĕнче те, шкулта та.

5 - м ĕ ш  а ч а.

Пирĕн «Пучах» ачисем –
Ташă-сăвă ăстисем.
Акă курăр-ха: вĕсем
Янратаççĕ юрăсем.

6 - м ĕ ш  а ч а.

Эп – чăваш ачи! Саватăп
Чĕвĕл-чĕвĕл чĕлхене.
Юратап сăвва-юрра та,
Купăса та кĕслене.

7 - м ĕ ш  а ч а.

Эп – чăваш ачи! Саватăп
Хамăрăн чăваш çĕрне.
Вăл кипке те ман, сăпка та –
Ăна манмăп ĕмĕрне.

8 - м ĕ ш  а ч а.

Чăвашла паян юрлатпăр,
Чăвашла сăвă калатпăр.
Чăваш тумĕ тăхăнса
Чăвашла та ак ташлатпăр.

Ачасем чăваш ташши ташлаççĕ.

Е р т с е  п ы р а к а н. Шупашкар хулинчи И.Я. Яковлев палăкне 1970 çулта патшалăх хӳттине илнĕ, вăл Раççейри чи паха культура объекчĕсенчен пĕри шутланать. Çу кунĕсенче унта çитсе курма тăрăшăпăр. И.Я. Яковлев палăкĕ çине чăвашла тата вырăсла «Чăвашсен çĕнĕ çырулăхне пуçараканĕ. Аслă вĕрентекенĕмĕр. Основоположник новой чувашской письменности. Выдающийся просветитель» тесе çырнă. Чăваш халăхне панă халалĕнче Иван Яковлевич мĕн тери ăслă сăмахсем каласа хăварнă: «Вырăс халăхĕ пит пысăк халăх. Вăл ырă кăмăллă, ăслă: эсир ăна итлĕр, юратса пурăнăр». «Вырăс патшалăхĕ çине




шанса пурăнăр, ăна юратăр, вара вăл сирĕн аннĕр пулĕ» тени те пур унта.

Хамăр çуралнă вырăна, тавралăха пирĕн юратмалла, хисеплемелле. Вăл чи сăваплă вырăн, ăна таса та тирпейлĕ тытас пулать.

9-мĕш ача.

Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе!
Эс – чи пахи, эс – чун уççи.
Тăван чĕлхе – чăваш чĕлхи,
Пин чĕлхерен чи çепĕççи.

10-мĕш ача.

Ĕмĕрсем иртсе пыраççĕ
Ӳстерсе ăс-хал мулне.
Кĕнекеçĕсем шыраççĕ
Чăвашсен кунне-çулне.

Ертсе пыракан. И.Я. Яковлев ачалăхĕ çăмăл пулман. Çуралсанах тепĕр виçĕ кунтан амăшĕ вилет, вара ăна Пахом Кириллов çемйи усрава илет. Вĕсем пĕчĕк Ванюка хăйсен ачи пекех юратса ӳстереççĕ. Вăл питĕ ĕçчен ача пулнă, нимĕнле ĕçрен те хăраман, пушă вăхăтра ялти ачасемпе вылянă.

«Ал татмалла» вăйă.

Ертсе пыракан. Иван Яковлев хăйĕн тăрăшулăхĕпе пултарулăхне кура питĕ нумай вĕреннĕ. Кайран хăй те пулас чăваш композиторĕсене, поэчĕсене, писателĕсене вĕрентнĕ. Кам илтмен-ши çак йĕркесене?

11-мĕш ача.

Пуш уйăхĕн вĕçĕнче
Хĕвел пăхрĕ ăшăтса,
Силпи чăваш ялĕнче
Юр ирĕлчĕ васкаса.

12-мĕш ача.

Тусем, сăртсем хуп-хура
Юрĕ кайса пĕтнĕрен,
Тухать курăк çăп-çăра
Хĕвел хытă хĕртнĕрен.

13-мĕш ача.

Хĕл куççулĕ шавласа
Юхса кайрĕ çырмара.
Ачи-пăчи выляса
Чупса çӳрет урамра.

Ертсе пыракан. Ку «Нарспи» поэма пуçламăшĕнчи «Силпи ялĕнче» сыпăкран илнĕ йĕркесем. Ăна Яковлев вĕренекенĕ, чăвашсен пултаруллă поэчĕ Константин Васильевич Иванов çырнă. Иван Яковлевич хăйĕн букварьне чăваш ачисем тăван чĕлхепе вĕренччĕр тесе кăларнă. Вырăссем-и, чăвашсем-и, тутарсем-и – пурте пĕр халăх тенĕ вăл хăйĕн букварĕнче. Çавăнпа та Иван Яковлевич вырăссемпе чăвашсем туслă пурăнччăр тенĕ. Хăй те вăл чăвашсен тата вырăссен юррисене юратнă, хăй вĕрентнĕ шкулсенче те ачасене вырăс халăх юррисене юрлама вĕрентнĕ.

«Улми лайăх-и» юрă.

14-мĕш ача.

Кĕнеке – пĕлӳ çăлкуçĕ,
Алăран алла вăл куçĕ.
Упрасам ăна эс, тусăм!
Вăл сана та кӳрĕ усă.

Ертсе пыракан. Иван Яковлев çырнă калавсем ĕçе юратма, чăнлăха мала хума, çынпа ырă пулма, пĕр-пĕрне хисеплеме вĕрентеççĕ. Вăл пуçарнă çырулăх хăвачĕпе чăваш литератури çĕнĕрен те çĕнĕ хайлавсемпе пуянлансах пырать. Акă мĕн çырнă чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай чăваш çĕрĕ çинчен.

15-мĕш ача.

Çĕршывăмçăм, Чăваш çĕр-шывĕ!
Сан чĕвĕл-чĕвĕл чĕлхӳпе,
Тен, эп те çĕр çине йĕр хывăп
Сан пĕчĕкçĕ пĕр мĕлкӳ пек.

Ертсе пыракан. Хисеплĕ ачасем, ашшĕ-амăшĕсем! Çакăнпа пирĕн уяв вĕçленет. Паян эпир чăваш юррисем юрларăмăр, сăвă каларăмăр, вăйă вылярăмăр. Малашне те хамăр чăваш пулнине туйса чăваш çĕрĕн пуласлăхĕшĕн тăрăшасса, чăн-чăн патриотсем пуласса шанас килет. Пирĕн, чăвашсен, чăвашах пуласчĕ. Халĕ пурне те вăйă картине чĕнетĕп.

«Атьăр ташша пуçлар-и» вăйă карти.